# Çунашка

Пур çĕрте те шурă юр
Мамăк евĕр кăпăшка.
Ярăнмашкăн маннăн пур
Çĕнĕ çăмăл çунашка.

Çӳллĕ те сĕвек сăртран
Ыткăнса çуна анать,
Хăвăрт пынă вăхăтра
Çилçунатлăн туйăнать.

Питĕ савăк кăмăла:
Çума-çумăн – пăх та кур –
Сиккипе, ăмăртмалла
Вирхĕнсе пырать кампур.

Кĕрсе ӳкрĕп пашт! кăна
Кĕрт ăшне… çуна чупать,
Çăмламас Кампур ăна
Самантрах кайса тупать.

*Вирьял,Ю. Çунашка : [сăвă] / Ю. Вирьял // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 275.*